**Юсав**

*Н.И.Ашмарина асăнса*

Хăрпан амăшĕ — Хăт,
Хăт амăшĕ - Юсав.
*Халăх каларăшĕ*

Илемĕн ылтăн тӳпинче,
Хăтлавăн сарă çутинче
Ан пултăр сĕмлĕхĕн мĕлки,
Ун илеме пăсас екки!..
Этемĕн чунĕ сасăран,
Тĕсрен, асран та туйăмран
Тăвать çав ылтăн тӳпене,
Карать ăна çĕршыв тĕлне.
Чĕресенчи çав ыр çутта,
Ас-хакăлти нĕре-хăта
Гармони теççĕ пĕрисем.
Эпир калар: тавах, Юсав,
Чунсен мулне пухнишĕн — тав!
Санра — телей, Саву çумми,
Чун тăнăçлăхĕ, чун çемми, —
Савун пехетлĕ парнисем...
Санра — Килĕшӳпе Илем.

1973

*Айхи, Г. Юсав : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 135.*